**Янкаса аса ил**

Хушăран эс виçесĕр çӳле кармашасшăн,
Тусанран пуш юпа лартнă пек çавра çил,
Унашкал самантра, сăвăç тусăм, тархасшăн,
Янкаса аса ил,
Янкаса аса ил.

Ун сăмахĕ – чăваш мешехи пек сăпайлăх,
Ун сăмахĕ – çăлкуç сасси пек çураçу,
Çавалсен, Шетмĕсен ырă юхăмĕ майлă
Çут тĕнче кĕввипе пĕр килен калаçу.

Вăл чĕнет-йыхăрать-и – хĕвел пулĕ тейĕн,
Тем сĕнет-и пире – вăй кĕртсе ыталать.
Юрату хĕмĕнче эс çӳретĕн телейлĕн,
Ĕмĕтсен йĕррипе талпăнан тăвалла.

Аслă чăнлăх сасси сарăлать ирхи чанăн,
Юнашар – касăк йĕплĕ пралуклă Тагил.
Йывăрпа тытăçас самантра эс, тăванăм,
Янкаса аса ил, Янкаса аса ил.

*2004*

*Сементер, Ю. Янкаса аса ил : [сăвă] / Ю. Сементер // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 438.*